ĂСЛĂЛĂХ ĔÇĔ

# «Пушкăртстан халăхěсен фольклорě» энциклопеди кун çути курчě

***Иртнě çул вěçěнче «Пушкăртстан халăхěсен фольклорě» вырăсла-акăлчанла энциклопеди кун çути курчě. Асăннă кěнекене 2021 çулта Пушкăртстанра Пěтěм тěнче шайěнче ирттерекен фольклориадăна хатěрленсе ятарлă кăларăм тунă. Кěнекене кăларас ěçре Пушкăртстан Республикинчи ученăйсем, фотографсем, художниксем тата ыт. те чылай вăй хучěç. Энциклопедие халăх умне тулли информаципе çитерес тесе тěпчевçěсем ырми-канми икě çул ěçлерěç.***

Кěнеке икě пайран тăрать. Пěрремěш пайра регионти фольклорпа фольклористикăн лару-тăрăвне ăнлантаракан словарь статйисене панă. Энциклопедин иккěмěш пайěнче биографипе ăнлантару статйисене алфавит йěркипе вырнаçтарнă. Республикăра пурăнакан халăхсен хальхи вăхăтри фольклор шайне кěнекери 850 иллюстрацие 600 яхăн статья уçса парать.

Кăларăмра ытти халăх сăмахлăхěн тěпчевěсемпе Пушкăртстан чăвашěсен халăх сăмахлăхě те вырăн тупрě. Наукăпа редакци коллегине Пушкăрт патшалăх университетěнчи Çтерлě филиалěн Л.А. Афанасьева доцентěпе Р.Г. Кузеев ячěллě этнологи тěпчевěсен институчěн этнографи пайěн ăслăлăх аслă ěçтешě, истори ăслăлăхěсен кандидачě И.Г. Петров кěнине палăртса хăвармалла. Чăваш халăх сăмахлăхěн хăй еврěлěхне, жанрěсене, халăх сăмахлăхне тěпчекенсем тата ытти çинчен словарь статйисене çырма Чăваш Енри тěпчевçěсене те явăçтарни паха пулчě. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхěсен институчěн филологи енěн чěлхе пěлěвě секцийěн ăслăлăх аслă ěçтешě, филологи ăслăлăхěсен кандидачě А.В. Кузнецов, фольклористика секцийěн ăслăлăх тěп ěçтешě (ведущий сотрудник), филологи ăслăлăхěсен кандидачě Г.Г. Ильина, литература пěлěвěн секцийěн ăслăлăх тěп ěçтешě, филологи ăслăлăхěсен докторě В.Г. Родионов энциклопеди кăларас ěçе хастар хутшăнчěç. Çтерлě филиалěн тутар тата чăваш филологи кафедрин преподавателěсем Л.А. Афанасьевапа Л.В. Коротаева, Р.Г. Кузеев ячěллě этнологи тěпчевěсен институчěн этнографи пайěн ăслăлăх аслă ěçтешě И.Г. Петров халăхăмăрăн сăмахлăхне уçса паракан статьясем çырчěç. Çавăн пекех Пушкăртстанри чăваш обществипе культура центрěсем çинчен Ю.П. Михайловпа Л.И. Мурманская тулли информаци тăратнă. Пишпÿлек районěнчи «Çутă çул» хаçат корреспонденчě М.А. Яковлева та çак ěçе хутшăннине палăртмалла.

Кěнекене Пушкăртстан чăвашěсен халăх сăмахлăх тěпчевçисене кěртнě, вěсен фольклористикăри пěлтерěшне палăртса хăварнă: Н.И. Ашмарин, Г.И. Комиссаров, В.А. Мошков, П.В. Пазухин, П.А. Петров-Туринке, И.В. Салтыков, П.А. Федоров (Минюк), Ф.Н. Вуколов-Эрлик, М.Г. Кондратьев, Е.С. Сидорова, Н.И. Егоров, В.Г. Родионов, И.Г. Петров, Л.А. Афанасьева, Л.В. Коротаева. Çавăн пекех Пушкăртстан чăвашěсен халăх сăмахлăхěн çак жанрěсемпе йăли-йěркисем вырăн тупнă: мăнкун, çимěк, çăварни, витлешÿ, чěнÿ-йыхрав, йěрÿ-хÿхлев, кěлěсем, Питрав кунě, вăйă, чÿк т.ыт. Вěсен уйрăмлăхěсене палăртса хăварнă май сăн ÿкерчěксене те кěртнě. Пушкăртстанра чăваш халăх сăмахлăхне пухас тěлěшпе йěркеленě ăслăлăх экспедицисене уçса панă. Кунта Çтерлě филиалěн тутар тата чăваш филологи кафедрин преподавателěсем грантсем шайěнче çулсерен ирттерекен экспедицисен пěлтерěшне тарăн хак панă. Энциклопеди страницисенче Пушкăртстанри чăваш халăх фольклор ушкăнěсене, вěсен пěлтерěшне кăтартнă. Кăтартмăшра пěтěмěшле 25 фольклор ушкăнне палăртнă. Чăваш ушкăнěсен чылай сăн ÿкерчěкěсем вырăн тупнă. Унсăр пуçне фольклорпа ирттернě тěрлě мероприятисене хутшăннă чăваш уйрăмěнчи «Савни» ансамбль сăн ÿкерчěкěсене те кěртнě.

«Пушкăртстан халăхěсен фольклорě» энциклопеди Пěтěм тěнче шайěнче республикăри тěрлě халăхсен сăмахлăхěпе, культурипе, йăли-йěркипе паллаштаракан паха кěнекесенчен пěри пулса тăрать.

***Лира АФАНАСЬЕВА,***
***Çтерлě филиалěн тутар тата чăваш филологи кафедрин доценчě***